# УЯВ ЯЧĔПЕ, ЮРАТНĂ ХĔРАРĂМСЕМ!

Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРЎШĔН

Юнкун
2007 ç., пуш, 7
18 /8936/№

Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

**Ырă хĕрарăмсем!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Ку вăл – çут çанталăк чĕрĕлнĕ, пĕтĕм тавралăх ăшăпа тата çутăпа тулнă вăхăтра килекен çурхи чи илĕртӳллĕ уяв.

Çут çанталăк сире чи пысăк пуянлăх – тĕрĕслĕх, кăмăл ăшши, сисĕмлĕх, çепĕçлĕх, хавхаланулла вăй парнеленĕ. Эсир пурнăçра – йăлара, професси çулйĕрĕ çинче е общество пурнăçĕнче – мĕн тăватăр, çавна пĕтĕмпех çĕкленӳллĕ кăмăлпа, тĕнчене çутă та ырă тата хаваслă тăвас туйăмпа пурнăçлатăр.

Хĕрарăмпа çуркунне пурнăç пуçламăшне, юратупа илеме, шанчăка сăнарласа тăраççĕ. Эсир пурнăç паратăр тата ачалăха телейлĕ тăвас, çынна килĕшӳллĕн воспитани парса ӳстерес тесе, мĕнпур условисене тума тăрăшатăр.

Пирĕн хаклă аннесем, арăмсем, хĕрĕмĕрсем, аппасем, асанне-кукамайсем! Паян эсир ăшă сăмахсемпе тава, чун-чĕререн тухакан пархатарлăхпа тараватлăх ăшшиллĕ сăмахсене уйрăмах нумай илтетĕр. Сирĕн кашни кунăр телейпе, савăнăçпа, çывăх çынсен тимлĕхĕпе тата ăшшипе тултăр.

Сире çирĕп сывлăх, çемьере тивлетпе юрату сунатăп.

***Н. ФЕДОРОВ,***
***Чăваш Республикин Президенчĕ.***

**Хаклă хĕрарăмсем!**

Сире çурхи илĕртӳллĕ уявпа – Пĕтĕм тĕнчери Хĕрарăмсен кунĕпе – Мартăн 8-мĕшĕпе – чĕререн саламлатăп.

Çак кун эсир саламсемпе чечексене, хăвăра тивĕçлипе тав туса тата юратса каланă сăмахсене йышăнса илетĕр. Сирĕн чун-чĕресен ăшшипе ыр кăмăллăхĕнчен, чăтăмлăхран, çепĕçлĕхпе тараватлăхран тĕлĕннине палăртма мана та ирĕк парсамăрччĕ.

Эсир пирĕншĕн хавхаланупа çĕкленӳллĕ туйăмсен çăл куçĕ пулса тăратăр. Сирĕн илемпе килĕшӳлĕхе ӳнерçĕсемпе поэтсем мухтаççĕ. Эсир пире ăшă, хăтлăх, юратупа телей парнелетĕр.

Сире çирĕп сывлăх, ăшă кулă, лайăх кăмăл-туйăм, пур ĕçре те ăнăçусем сунатăп. Эсир яланах хăвăра юратакан тата хăвăр юратакан çынсен хушшинче пулăр, сирĕн çемйĕрте тăнăçлăхпа ырлăх хуçаланччăр, сирĕн ырă кăмăл-туйăма никам та ан пăсайтăр.

Сирĕн чун-чĕрере кирек хăçан та çуркунне пултăр, çавăн чухне телей, юратупа ăнăçу сире нихăçан та пăрахмĕç.

***Павел СЕМЕНОВ,***
***Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци членĕ.***

**Ытарайми хаклă хĕрарăмсем!**

Сире çуркуннехи чи ăшă уяв – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Çак уяв пире пурне те хĕрарăмăн нихçан сӳнми илĕртӳлĕхĕ, анне тӳсĕмлĕхĕпе ăсĕ, мăшăрăмăр юратăвĕ, хĕрĕмĕр ачашлăхĕ тата аппа-йăмăк ыр кăмăллăхĕ умĕнче пуç тайнипе çыхăннă питĕ ырă туйăмпа пĕрлештерет.

Пирĕн пурнăçăмăр сирĕн илĕртӳлĕхпе ырă кăмăлăрăн ăшшипе тата çуттипе пуян. Сирĕн пулăшăвăр тата юратăвăр пире малалла ăнтăлма хавхалантараççĕ, харсăрлăхпа çирĕп кăмăл кӳреççĕ.

Сире, хаклă та юратнă çыннăмăрсем, ăшă чунăршăн, тĕнчемĕре çутă та хăтлă, савăнăçлă тума пĕлнĕшĕн пысăк тав.

Сире пурне те чĕререн сывлăх, çамрăклăхпа илем, амăшĕн телейне, çемьере савăнăç, ырлăх сунатăп.

***Йĕпреç район пуçлăхĕ А. ПЕТРОВ.***

**Хаклă та хисеплĕ хĕрарăмсем!**

Йышăнса илсемĕр Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе пирĕн чун-чĕресенчен сăрхăнса тухакан ăшă салама!

Хĕрарăм яланах ырă кăмăллă, тӳрĕ чунлă пулма пĕлнипе палăрса тăрать, вăл тирпейлĕхпе тасалăх тăваканĕ, хавхалану кӳрсе тăраканĕ. Сирĕншĕнех çĕр çинчи кăткăс хирĕçӳсене татса параççĕ, сирĕншĕнех паттăрла ĕçсем тăваççĕ, эсир пуррипех çĕр çинчи пурнăç малалла тăсăлать. Паян эсир пурнăçăн мĕнпур сферисене активлă хутшăнатăр, çĕршывăн, республикăн социаллă-экономикăллă аталанăвне нимĕнле виçепе те виçме çук пысăк тӳпе хыватăр. Сирĕн хушăра паллă ученăйсем, общество деятелĕсем, пысăк предприятисемпе организацисен ертӳçисем пур, эсир ачасене вĕрентетĕр, çынсене сиплетĕр, культура ĕçĕнче хĕрсех вăй хуратăр. Сирĕн хулпуççисем çинчех килти хуçалăх тытăнса тăрать, эсир çемье вучахне упратăр. Эпир, арçынсем, сирĕн ырă кăмăл, ăшă чунăр умĕнче пуçăмăрсене таятпăр.

Çак уяв кунĕнче çĕр çинче мĕн лайăххи, мĕн ырри пур – йăлтах сире сунатпăр. Яланах сывлăхлă та хитре пулăр, сăпайлă та чипер курăнăр.

***РФ Патшалăх Думин депутачĕ***
***Анатолий АКСАКОВ.***

**Хисеплĕ те хаклă хĕрарăмсем! Кукамайсемпе асаннесем, аннесемпе аппасем, йăмăксемпе хĕрĕмĕрсем!**

Çуркуннехи чи çутă та чи илемлĕ уяв умĕн йышăнса илсемĕр пирĕнтен, мĕнпур арçынсенчен, чи ăшă та çепĕç салам! Çак кун эпир, арçынсем, сире чĕре тĕпĕнче упракан чи вăрттăн туйăмсене уçса паратпăр, ытти чухне питех те ĕçлĕ пирки çакна тума вăхăт çитерейместпĕр пулас. Эсир пире виçесĕр юрату парнелетĕр. Çакă пире пысăк çитĕнӳсем тума хавхалантарса тăрать.

Амăшĕсем, эсир ачасем çитĕнтеретĕр, эсирех çемье тĕрекне хушса пыратăр, çав вăхăтрах чи пăларăмлă ĕçсене те эсир хутшăнмасăр пурнăçлама çук.

Уяв кунĕнче сирĕн кăмăла хитре чечексем çемçетчĕр, çывăх çынсен юратуллă сăмахĕсем чун-чĕрене ăшăтчăр. Çирĕп сывлăх пултăр сире, пурнăçра, ĕçре çитĕнӳсем тума иксĕлми хавхалану, ăнăçусем сунатпăр.

***ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕ***
***В. СВЕШНИКОВ.***



# ВЕТЕРИНАР – ЯВАПЛĂ ПРОФЕССИ

**Юлашки çулсенче «Рассвет» АУО ĕç кăтартăвĕсем лайăхланса пыраççĕ. Предприяти выльăх шутне ӳстерессипе те, витесене çĕнетессипе те, техника туянассипе те ырă тĕслĕх кăтартать. Пĕлтĕр акционерсен обществинчи самăртма хупнă сыснасен талăкри ӳт хушаслăхĕ вăтамран 580 грампа танлашнă, пурĕ 5943 пуç сысна çури илнĕ, аш-какай комбинатне 2887 пуç сысна ăсатнă, халăха вара 1343 пуç сутнă. Предприяти çулталăка тупăшлă вĕçленĕ. Кăçалхи 2 уйăхра кăна сыснасен йышĕ тата 700 ытла пуç хутшăнчĕ. Паян комплексра 6400 ытла пуç выльăх усраççĕ.**

**Çак ӳсĕмсенче кунта вăй хуракан Татьяна Белкова ветеринар техникĕн тӳпи те пĕчĕк мар.**

Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн ветеринари уйрăмĕнчен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă хĕр унтакунта ĕç шыраса хăшкăлман, çамрăк специалиста «Рассвет» предприятире хапăл тусах ветеринари техникĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыма шаннă. Кăçал унтанпа виçĕ çул çитет ĕнтĕ.

**/Вĕçĕ 2-мĕш стр./.**

**ӲКЕРЧĔКРЕ**: *Президент стипендиачĕ Татьяна Белкова ĕç вырăнĕнче.*

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕ.***

**Çепĕç чунлă ырă хĕрарăмсем!**

Йĕпреç районĕнчи хĕрарăмсен канашĕ сире Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе хĕрӳллĕн те ăшшăн саламлать.

Пĕтĕм чун-чĕререн сире çирĕп сывлăх, телей, çутă ăраскал сунатпăр. Сирĕн килте яланах лăпкă та кăмăллă лару-тăру хуçаланччăр, çемьере татулăхпа килĕшӳлĕх пултăр, сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр, юратупа туслăх вăй парса тăччăр.

Яланах çеçке пек пулăр,
Сар хĕвел пек йăлтăр кулăр.
Ачăрсем те сывă пулччăр,
Сирĕнпе вĕсем мухтанччăр.

***Г. АБРАМОВА,***
***районти хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.***

**Милые женщины – работники и ветераны потребкооперации, уполномоченные и пайщики!**

От всей души поздравляем Вас с прекрасным праздником 8 Марта!

Желаем благополучия и мира в семье, удачи и успехов во всех делах и добрых начинаниях, неиссякаемого оптимизма, счастья и хорошего настроения. Пусть душевная красота и любовь украсят вас и вашу жизнь.

***Председатель совета Ибресинского райпо***
***В. ПАХОМОВА.***

**Милые женщины!**

Страховой отдел Росгосстраха в п. Ибреси от всего сердца поздравляет вас с весенним замечательным праздником – Международным женским днем! Желаем вам здоровья и бодрости духа, любви и тепла, женственности и красоты, молодости и обаяния, благополучия и удачи.

***Начальник страхового отдела Р. ИЛЬИНА.***




ÇУЛТАЛĂК ДИРЕКТОРĔ

# ЙĂЛА-ЙĔРКЕРЕН – ИННОВАЦИ ПАТНЕ

**ЧР Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министерстви пилĕк çул каялла «Хĕрарăм – çулталăк директорĕ» конкурс йĕркелесе янă. Çак конкурсра социаллă ыйтусене ăнăçлă татса паракан, ыр кăмăллăх ĕçне туса пыракан, общество ĕçне хастар хутшăнакан, ертсе пырас ĕçре опыт пухнă хĕрарăм-ертӳçĕсене палăртаççĕ. Çак тапхăрта Йĕпреç Енри хĕрарăм-ертӳçĕсем унта хутшăнса тĕрлĕ номинацисенче çĕнтерме пултарчĕç. Вĕсем хушшинче Пучинкери пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул директорĕ Зоя Юрьевна Кузьмина та пуррине уйрăммăн палăртса хăварасшăн. Пурнăç тĕллевĕ патне çирĕппĕн утакан çак хĕрарăмăн ырă ĕçĕсем сахал мар. Паян вăл хăйне телейлĕ тесе шутлать, мĕншĕн тесен хăй хыççăн ырă йĕр юлнине курса тăрать. Анлă шухăшлама пĕлни, ĕçченлĕхĕ, чăтăмлăхĕ ăна малалла талпăнма пулăшаççĕ.**

**Çак кунсенче хаçат корреспонденчĕ З. КУЗЬМИНА директорпа тĕл пулса калаçнă.**



**– Зоя Юрьевна, сире «Хĕрарăм – çулталăк директорĕ» конкурсăн пĕрремĕш тапхăрĕнче çĕнтернĕ ятпа саламлатпăр. Республикăри вăйлă хĕрарăм-ертӳçĕсемпе тупăшма çăмăл пулмарĕ пулĕ.**

– Салам сăмахĕшĕн тавах. Пытармастăп, çак сумлă конкурса хутшăнас шухăшăм иртнĕ çулсенчех çуралнă. Пĕлтĕр эпĕ çак конкурсра вăйлисен йышне лекеймерĕм. Хăвăн ĕçе, пултарулăха, ăсхакăла кăтартма та ăсталăх кирлĕ иккен, çакна валли документсене тĕплĕ хатĕрлемелле. Çак конкурса хутшăнни çинчен свидетельство панă чухне çапла каласа хăвартăм: «Çитес çул çак сцена çинче тепре тĕл пуличчен!..»

Кăçалхи конкурса хатĕрленнĕ чухне пĕтĕм ăс-тăн вăйне, пултарулăха пама тиврĕ. Кунта талпăну та, чăтăмлăх та кирлĕ çав. Шанăçа çухатмарăм. «Йăла-йĕркерен – инноваци патне» номинацире çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕм. Çак конкурсра район чысне хӳтĕленĕ «Йĕпреçри техника инвентаризацийĕн бюровĕ» МУП директорĕ Ольга Владимировна Тимукова вара «Лайăххи патне талпăнни» номинацире палăрчĕ. Хальхинче «Хĕрарăм – çулталăк директорĕ» конкурса республикăри 40 хĕрарăм-ертӳçĕ хутшăнчĕ. Пире чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче савăнăçлă лару-тăрура ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ С. А. Гапликов, экономика министрĕ И. Б. Моторин саламларĕç, Дипломсем тата хаклă парнесем парса чысларĕç.

**– Сире «Йăла-йĕркерен – инноваци патне» номинацире çĕнтерме мĕн пулăшрĕ?**

– Эпир хамăр шкулта юлашки çулсенче туса ирттернĕ ĕç-хĕл. Пучинкери вăтам шкулта чăваш халăхĕн аваллăхран юлнă йăли-йĕркисене сарас тĕлĕшпе чылайранпах ĕçлеççĕ. Çак ĕçре тĕрлĕ енлĕ мелсемпе усă курма тăрăшатпăр. Сăмахран, учительсен художество пултарулăх коллективĕ фестиваль-конкурссене чăваш тумĕсемпе хутшăнать. Çи-пуçа вĕрентекенсем хăйсемех ăсталанă. 90-мĕш çулсенчен пуçласа кашни çуркуннех «Чăваш уявĕ» мероприяти ирттертĕмĕр, каярах ăна ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче паллă тăвакан Чăваш чĕлхи кунĕпе çыхăнтартăмăр. Ку уява пĕтĕм шкул – вĕрентекенсем те, кашни класри ачасем те хутшăнаççĕ. Паян пирĕн шкулта кашни педагогăн тата вĕрентекенĕн хăйĕн чăваш çипуçĕ пур тесен хăшĕ-пĕри тĕлĕнĕ те. Çапла, ачасем чăваш тумĕсене – тухъяна, хушпуна, масмака, тĕрĕллĕ чăваш кĕпине, сурпана, шӳлкемене тата ыт. те – хăйсен аллисемпе е технологи предмечĕн урокĕсенче, е килте ăсталаççĕ. Паллах, вĕсене алĕç вăрттăнлăхне алла илме чăваш чĕлхипе литературине тата тăван ен культурине вĕрентекен Е. М. Михайловапа Л. Н. Клементьева, пуçламăш классен учительницисем Т. Н. Ивановапа З. А. Акчурина тата ыттисем, çавăн пекех ашшĕ-амăшĕсем пулăшаççĕ.

Кунта тата çакна каласа хăварасшăн. Тăван ен йăли-йĕркине аталантарас ĕçе пысăк тӳпе хывакан Елизавета Михайловна РФ Президенчĕн грантне – «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн паракан 100 пин тенкĕ премие тивĕçрĕ. Çак пысăк чыса пирĕн районтан пĕртен пĕр вĕрентекен тивĕç пулнă. Шкулта нумай çул вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен М. М. Андреева пире хăйĕн ăсталăхĕпе тата опычĕпе хавхалантарса пырать, çакăншăн ăшă сăмахсемпе тав тăватпăр ăна.

Пирĕн шкул коллективĕн пĕрлехи ырă ĕçĕсем çинчен нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Пучинкери вăтам шкулта вĕренекенсем районти олимпиадăсенче, наука кунĕнче, пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕсенче, спортра ӳсĕм хыççăн ӳсĕм туптани педагогсен ĕçченлĕхĕпе, анлă тавракурăмĕпе тата ачасен тăрăшулăхĕпе, талпăнăвĕпе çыхăннă. Эпĕ «Хĕрарăм – çулталăк директорĕ» конкурсăн пĕрремĕш тапхăрĕнче вăйлисен йышне кĕни пĕтĕм коллектив çитĕнĕвĕ тесе шутлатăп.

**– Эсир Пучинкери вăтам шкул директорĕн йывăр лавне хăçантанпа туртса пыратăр?**

– 2002 çултанпа. Эпĕ çак шкулта 1985 çулта Чăваш педагогика институтĕнчен вĕренсе тухсан ĕçлеме пуçланă, вырăс чĕлхипе литературине вĕрентетĕп. Чуна уçса калатăп, ку тăрăха эпĕ, Мураш районĕнчи Мулкачкассинче çуралса ӳснĕ хĕр, направленипе килсе лекрĕм, Пучинке ялĕ, ку тăрăхри ĕçчен халăх тӳрех тыткăнларĕ. Кунта шанчăклă тус-юлташсене тупрăм, ăшă йăва çавăртăм. Эсĕ ĕçе килĕштерсен, ĕçĕ те сана килĕштерет, теççĕ. Çак ялта тĕпленсе ĕçлес шухăш пĕрремĕш вĕренӳ çулĕнчех çирĕпленчĕ.

**– Тĕллев патне çитме мĕн кирлĕ çынна?**

– Чи малтан пурнăç тĕллевĕ, унпа пĕрле ăс-тăнпа тавракурăм, çирĕп вăйхал, талпăнупа чăтăмлăх т. ыт. те. Ӳркентĕн пулсан, сӳрĕклĕх çуралать. Алăри пурнăç тилхепине нихçан та лăнчăр ямалла мар. Тата вăхăтлăх чап-мухтавшăн çунмалла мар.

**– Тепĕр ыйту: XXI ĕмĕрти хĕрарăмăн мĕнле пулмалла?**

– Анлă шухăшлавçă, пултаруллă, ăстăнлă тата чăтăмлă та чунпа çирĕп пулмалла. Хĕрарăма хитрелĕхĕшĕн, тумланма пĕлнишĕн кăна мар, таса та ăшă чунпа пурăнма пĕлнишĕн те юратмалла. Шел, пурнăçа чылай япалана укçапа, пуянлăхпа хаклаççĕ çав...

**– Сирĕн паянхи ĕмĕт.**

– Пуш уйăхĕн 1-3-мĕшĕсенче «Хĕрарăм – çулталăк директорĕ» конкурсăн иккĕмĕш тапхăрĕ Мускавра федераци шайĕнче иртет. Ăна Раççей хĕрарăм-предпринимательсен ассоциацийĕ йĕркелет. Эпĕ тата О. Тимукова унта тухса каятпăр. Пирĕн ĕмĕт – çак конкурсра район, Чăваш Ен чысне тивĕçлĕ шайра хӳтĕлесси.

**– Ăнăçу сунатпăр.**

– Тавтапуç.

***К. АЛИМАСОВ калаçнă.***

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *З. Ю. Кузьмина.*

Уважаемые учителя, воспитатели, руководители образовательных учреждений, ветераны педагогического труда!

Примите самые теплые и искренние поздравления с Международным женским днем, замечательным праздником весны, любви и красоты – 8 Марта!

Пусть наступающая весна подарит Вам прекрасное настроение, надежду и веру в лучшее, удачу и успех во всех Ваших делах. От всего сердца желаю вам красоты и обаяния, уважения и любви близких.

Счастья, здоровья Вам и Вашим семьям.

***Начальник отдела образования администрации Ибресинськього района А. НИКОЛАЕВ.***

# ВЕТЕРИНАР – ЯВАПЛĂ ПРОФЕССИ

**/Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр./.**

– Маттур специалист, хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет, тулли кăмăлпа ĕçлет. Ун пеккисен малашлăхĕ пысăк, – çакăн пек хак пачĕ предприяти ертӳçи В. Н. Русков Татьяна Юрьевна Белкова пирки.

Кунта ветеринари служби çине пысăк яваплăх тиенĕ. Татьяна Белкова ветеринари техникĕ Алексей Харитонов тĕп ветврачпа тата Любовь Кадышева ветсанитарпа пĕрле выльăхсем чирлесрен профилактика ĕçне куллен-кун пурнăçлаççĕ. Сыснасем чирлени предприятие тăкак кăна кӳрет. Пĕрремĕшĕнчен, хальхи вăхăтра эмелĕсем питĕ хаклă; иккĕмĕшĕнчен, чирленĕ выльăх ыттисемпе тан ӳсеймест, ун пеккисене ытларах чухне «пăрахăçлама» тивет.

Татьянăна коллективра хисеплеççĕ. Çапла, кирек кама та ĕçĕсемшĕн ырлаççĕ. Ветеринари техникĕ малашлăха çирĕппĕн пăхать, заочно майпа Н. П. Огарев ячĕллĕ Мордва ветеринари университетĕнче пĕлӳ илет. Халĕ вăл виççĕмĕш курсра. «Производствăран уйрăлмасăр вĕренме йывăр мари?» - тесе ыйтсан, Т. Белкова йăл кулчĕ те, çапла хуравларĕ: «Йывăрлăхран хăранă пулсан эпĕ кунта ĕçлеме те килместĕм...»

Белковсен йăхĕнче ветеринарсен династийĕ тымар янă иккен. Татьянăн амăшĕ, Валентина Ивановна, райпон ветеринари аптекин ертӳçи пулса ĕçлет. Аппăшĕ, Надежда Николаева – «Йĕпреçри выльăх-чĕрлĕх чир-чĕрне хирĕç кĕрешекен станци» патшалăх учрежденийĕнчи ветврач. Вăл та Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче пĕлӳ илнĕ, кăçал Хусанти ял хуçалăх академийĕнчен заочно майпа вĕренсе тухать.

Предприятин ӳсĕмĕ – коллектив тăрăшулăхĕ. Çак ӳсĕме туптассишĕн Татьяна Белкова та Йĕпреç поселокĕнчен куллен-кун ĕçе çӳрет. Килĕштерет вăл хăйĕн ĕçне. Иртнĕ çулхи ĕç кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш Республикин Президенчĕн ятарлă стипендине илме тивĕç пулни ăна малашне тата хастар та тăрăшуллă ĕçлеме хавхалантарать.

***К. КОСТИН.***



# ПАТШАЛĂХ ДУМИН ДЕПУТАЧĔ – ПИРĔН РАЙОНТА

**Пуш уйăхĕн пĕрремĕшĕ Кĕлĕмкасси шкулĕнчи вĕренекенсемпе вĕрентекенсемшĕн çуркунне пуçламăшĕ пулнипе анчах мар, сумлă хăна килнипе те асра юлĕ. Вĕсем патне Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци членĕ Павел Владимирович Семенов тĕл пулма килнĕ.**

Ăна Кĕлĕмкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ И. В. Ильина, районти вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ А. А. Николаев, Йĕпреçри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренерĕ В. В. Пашков тата педагогсемпе ачасем ăшшăн кĕтсе илчĕç. Тĕлпулура Павел Владимирович пирĕн çĕршывра тата тăван республикăра юлашки çулсенче тунă ĕçсем пирки çеç мар, мĕнле тĕллевсем кĕтсе тăни çинчен те каласа пачĕ. Пушă алăпа килмен иккен Мускаври хăна – вăл шкула 10 мăшăр пластика йĕлтĕр парнелерĕ. Депутат чылай çул тăрăшса ĕçленĕ педагогсене те парнесемсĕр хăвармарĕ. Павел Семенов, йĕлтĕрçĕсен эстафетине хутшăннă 1-4-мĕш классенчи шăпăрлансене те Владислав Васильевичпа пĕрле пĕчĕк кучченеçсем валеçрĕ.

Павел Семенов – Чăваш Енĕн ирĕклĕ кĕрешӳ ассоциацийĕн президенчĕ те иккен. Вăл çамрăк кĕрешӳçĕсен секцийĕн черетлĕ тренировкине пăхма кăмăл турĕ.

Кĕлĕмкассисемпе сывпуллашсан депутат Эйпеç ялне çул тытрĕ.

Ĕçлĕ тĕлпулу иртрĕ ялти вăтам шкулта. Депутат Патшалăх Думин ĕçĕ-хĕлĕпе ĕçтешĕсем йышăнакан саккунсемпе тата саккунсен проекчĕсемпе паллаштарчĕ. Çĕршывра приоритетлă наци программисенчен пĕри, çав шутра вĕрентӳ программи мĕнлерех пурнăçланса пыни çинчен каласа пачĕ. Чылай ыйтăва хуравларĕ вăл. Ял çыннисене халăх сывлăхне сыхлас ĕçре пулса тăнă лару-тăру тивĕçтереймест паян. Акă, Эйпеçри фельдшер пунктне те урăх вырăна – ача сачĕн çуртне куçарма палăртнă. Çĕнĕ вырăн клиентсене йышăнмалла пултăр тесен, укçа-тенкĕ сахал мар кирлĕ. Вĕсем Патшалăх Думин депутачĕнчен пулăшмашкăн ыйтрĕç.

Павел Владимировича вĕрентекенсене ĕç укçи ӳстерессипе çыхăннă ыйтусене те пачĕç. Тĕпрен илсен, парламентари çыннин хуравĕсемпе пухăннисем кăмăллă юлчĕç.

***Лариса ИВАНОВА.***

## АННЕНЕ

Эпĕ мухтанатăп, аннемĕр, санпа,
Мухтанăп мĕн виличчен ыр ятупа.
Пăхса ӳстерсе çын турăн пире,
Телей пиллерĕн çут тĕнчере.
Нумай йывăрлăх куртăн пурнăçра,
Кун-çулу иртрĕ сан асапра.
Аннесен чĕрисем çирĕпрен
Вĕсем нихăçан та ӳкмен.
Пĕлмерĕн эс канăç мĕнне,
Ялан ачусемшĕн çунса.
Аннеçĕм, юратнă анне,
Таяп пуçăма, ыр сунса.
Чăнах, сарлака ĕмĕр сакки,
Анчах унăн та пур чикки:
Çывăх çын çук çумра,
Сăнарĕ ялан чунăмра.
Пире вăй парса вăл тăрать,
Çула хĕвел пек çутатать.
Аннеçĕм, вилсен те, пĕрлех
Утать малалла пирĕнпех...

***Петр ВАСИЛЬЕВ, Çăкалăх ялĕ.***

## ЮРАТНĂ АННЕНЕ

Ман юратнă анне пур,
Тăрăшса пире пăхать.
Ăнланмасан хăш чухне
Вĕренме те пулăшать.
Эпĕ мĕн астăвассах
Почтăра вăл вăй хурать,
«Çĕнтерӳшĕн» хаçата
Ял-йыша çырăнтарать.

***Юра ПОЛИКАРПОВ, Пăкăянти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул, 4-мĕш класс.***

**Йĕпреç хула тăрăхĕн библиотеки Пĕтĕм тĕнчери Амăшĕсен кунĕ тĕлне шкул ачисем хушшинче сочиненисен конкурсне ирттернĕччĕ. Ачасем хăйсен чи çывăх çыннисене мĕнлерех юратни çинчен çыру ĕçĕнче пĕлтерчĕç. Прозăлла ĕçсен хушшинче чи лайăххи тесе конкурс комиссийĕ Чăваш Тимешри вăтам шкулта вĕренекен Ангелина Ефремован сочиненине палăртрĕ.**

**Пĕтĕм тĕнчери Хĕрарăмсен кунĕ тĕлне мĕнпур амăшĕсене ачисем юратни çинчен чунĕсене уçса пани вырăннех пултăр тесе çак ĕçе вулакансен умне кăларатпăр.**

# «АННЕ ЮНАШАР ЧУХНЕ ХĔВЕЛ ТЕ ĂШĂРАХ ТУЙĂНАТЬ...»

Анне... Мĕн тери çепĕç сăмах, унта мĕн чухлĕ ырă туйăм пытаннă. Аннесĕр тĕнче тĕксĕм. Анне – çут хĕвел, кулли ун шевлинчен те ăшăрах. Анне пире пĕчĕкрен ăс парать, инкек-синкекрен сыхлать, тĕрĕс çул çине кăларасшăн тăрăшать.

Манăн та ытти ачасенни пекех анне пур. Эпĕ çуралнăшăн питĕ хĕпĕртенĕ вăл, кашни кун юратса хăй кăкăрĕн сипетлĕ сĕчĕпе мана тĕрек панă, çепĕç аллисемпе хăй çумне çупăрланă.

Эпĕ сăпкара пĕчĕк çăмха евĕр макăрса выртнă чух ман умран кайма пĕлмен. Кăшт чирлесен миçе çĕр-каç çывăрман-ши тата вăл! Эпĕ кăшт çеç нăйкăшма пуçласанах вăл ман пата чупса пынă, юрă юрласа, сăпка сиктерсе лăплантарнă, çитернĕ, тасатнă, çунă... Пурнăç алăкне уçма, малтанхи утăмсем тума та пулăшнă. Пĕрремĕш хут шкула ырă сунса алла чечек çыххи тыттарса ăсатса яни паянхи кун та асăмрах. Мана çупăрласа чуп тăватăн, лайăх вĕренме хăлхаран пăшăлтататăн, куççульленнĕ куçна манран пытаратăн. Анчах эпĕ, пĕчĕкскер пулсан та, çутă тумлама тӳрех асăрхарăм, ăна хамăн пĕчĕк аллăмпа сăтăрса илтĕм.

... Унтанпа вунă çул пĕр сисĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Кайăк вĕçнĕ пек. Халĕ те анне мана шкултан килессе чăтăмсăррăн кĕтет, манăн çитĕнӳсемшĕн савăнать, лайăх вĕреннишĕн хĕпĕртет. Хуть те миçе çулта пулсан та – аннешĕн эпĕ пур пĕрех хӳтлĕхсĕр ача...

Анчах та тепĕр чух аннене кӳрентерни те пулкалать çав. Кайран ӳкĕнетĕп, чĕререн çунса, куççуле çăтса каçару ыйтатăп. Кирек мĕнле пулсан та эсĕ мана каçаратăн, мĕншĕн тесен ыррине çеç сунатăн, чĕрӳ ыратать пулсан та, ăшшăн пăхатăн. Эсĕ маншăн чи çывăх та шанчăклă çын.

Анне... Пурнăçра чи хакли эсĕ. Ырă чĕрӳ пире яланаха ăнланать, çепĕç сăмахсем йывăр вăхăтра лăплантараççĕ.

Çăмăл пулнă-ши санăн ачалăхупа çамрăклăху, çемье пурнăçĕ? Аннеçĕм, эпир пĕчĕк чухне эсĕ ĕçрен ĕшенсе таврăнаттăнччĕ те килте тирпейлеме тытăнаттăнччĕ. Апат пĕçерсе çитереттĕнччĕ пире. Аннеçĕм, эпир ун чухне сана йывăр пулнине ăнланман çав. Килте аттен кукамăшĕ те пурăнатчĕ, вырăн çинчен те тăраймастчĕ вăл. Тăванĕсем пур çĕртенех эсĕ кăна пăхаттăн ăна. Тепĕр чух, пире çывăрма вырттарсан, тĕпеле кайса шăппăн йĕреттĕн. Эпĕ вара, пĕчĕкскер, пĕтĕмпех илтнĕ, анчах пырса лăплантарма пĕлмен çав, айван пулнă. Йывăрччĕ сана, аннеçĕм, çапах никамран та пулăшу ыйтман. Йывăрлăхсем умĕнче эсĕ нихăçан та пуç усман, вĕсене çĕнтерме ху тĕллĕнех май тупнă. Мăшăру та пĕрлешнĕ чух тупа тунине маннă, пулăшма, ăнланма тăрăшман: яланах кӳрентернĕ, хушăран алă çĕклени те пулкаланă. Эсĕ пурпĕрех хуçălса ӳкмен, йывăр лава пĕчченех малалла туртнă. Санăн чăтăмлăху та пĕтсе çитрĕ пуль. Çавăн чухне вара çирĕп утăм суйласа илтĕн – хăвăн тĕпренчĕкӳсемпе çак района куçса килтĕн. Çук! Пире пăрахса хăвармарăн эсĕ, хăвăн пуласлăха мăшăр çунат айĕнче упрама тĕв турăн. Чĕрӳ мĕн чухлĕ вăрттăн ĕсĕклемен-ши санăн, çунман-ши? Хăвăн çумна мана çупăрласа çапла калаттăн: «Сан çине пăхсан, сан куллуна курсан, йывăрлăхсене те манса каятăп, чи телейлĕ çын эпĕ!» – теттĕн. Çемçе аллупа манăн кăпăшка çӳçе ачашлаттăн.

Пĕчĕк те сивĕччĕ пирĕн «çĕнĕ» пӳртре, çитменнине вăл кивĕччĕ. Çил унăн ăшшине хăваласа кăларса яратчĕ, чӳречерен сивĕ те шаккатчĕ, пурпĕрех пире нимĕн те хăратмастчĕ: пирĕн çумра нимрен шикленмен, йывăрлăхсене парăнман çын пурччĕ. Вăл – ытарайми анне. Каççерен вăл библиотекăна ĕçе васкатчĕ, эпир пиччепе килте юлаттăмăр.

Ĕçленĕ хушăра куçăмсăр майпа Культура институтĕнче ăс пухаттăн. Эрне вĕçленессе пиччепе чăтăмсăррăн кĕтеттĕмĕр. Халь-халь алăк уçăласса – анне килсе кĕрессе кĕтеттĕмĕр. Канмалли кун вара пирĕн пӳрт техĕмлĕ кукăль шăршипе тулатчĕ, чăн-чăн уявччĕ ку пирĕншĕн.

Çакăн пек йывăрлăхра атте пире аса та илмен пуль, кирлех пулман пуль эпир ăна. Ăнсăртран вăл çырнă пĕр çыру алла лекнĕччĕ. Унта вăл çĕнĕ çемье çавăрни çинчен пĕлтернĕччĕ. Питĕ йывăр пулчĕ мана çак сăмахсене ăша илме. Мана, ачана йывăр пулнă пулсан, анне çак сăмахсене мĕнле йышăннă-ши? Епле тӳснĕши унăн аманнă чĕри?

Ача чухне сывлăхăм хавшакчĕ манăн: санаторисенче вĕренни те, больницăра выртни те пулнă. Мĕнле çитместчĕ ун чухне мана санăн ăшшу, ачашлăху! Çумри хаклă ялала татăлса ӳкнĕ пекех туйăнатчĕ. Чӳречe умне пырса тăраттăмччĕ те пӳрнепе анне тесе çыраттăмччĕ, кунĕ-кунĕпе эсĕ килессе кĕтеттĕмччĕ. Мĕн чул çыру шăрçаламан пуль тата ун чухне сан пата?.. Эсĕ çак çырусене илсе вуланă ĕнтĕ, пĕр хут çеç мар, нумай вуланă вĕсене, шухăшупа яланах манпа пĕрле пулнă.

Тепĕр самант та асăмрах-ха. Эсĕ мана сипленме санаторине леçнĕччĕ. Аванччĕ унта, ачасемпе туслашса çитнĕччĕ ĕнтĕ. Пĕр шăматкун атте-аннесен кунĕ пулнăччĕ. Пӳлĕмри хĕр ачасем патне амăшĕсем килнĕччĕ, манăн анне темле майпа, те пушă вăхăт пулманнипе, те ĕçĕ нумай пулнипе çитеймерĕ. Эпĕ пӳлĕм алăкне питĕрсе хурсах макăртăм. Мĕн чул куççуль тăкнине пĕр минтер çеç пĕлет. Лăпланса алла хутпа кăранташ илсе анне сăнне ӳкертĕм. Кайран ăна хамăн вырăн патне çакса хутăм. Сан сăнна пăхмассерен курса калаçнă пек туйăнатчĕ. Алăпа питне ачашласа тĕнчери чи ачаш та ырă сăмахсем пăшăлтататтăм. Çак хут çинчи сăн паянхи кунччenех упранать манра. Йывăр вăхăтсенче яланах çак сăна алла илсе хам тĕллĕн калаçса лăпланаттăм. Вăл – мана пулăшакан талисман.

...Туслă та çирĕп пирĕн çемье: виççĕн пурăнатпăр эпир йывăрлăхсене çĕнтерсе, пĕчĕк телейпе те савăнса. Пичче вăтам шкул пĕтернĕ, халĕ Шупашкарта ăс пухать. Акă эпĕ те çитес çул шкул пĕтеретĕп. Мĕнле пурăнăн-ши эсĕ пĕччĕн ачусем çунатланса тăван йăвунтан вĕçсе кайсан? Аннеçĕм, сана хăй вăхăтĕнче пире ятланăшăн пĕрре те çилленместпĕр. Ара хăш чух итлемен те ĕнтĕ. Уншăн каçару ыйтатпăр. Эпир сана нихăçан та кӳрентерес темен. Ĕненсем...

Анне, мĕн тери лайăç сан çумра! Сассуна илтсен савăнас килет, кăмăл çĕкленет. Анне юнашар чухне хĕвел те ăшăрах туйăнать. Унăн йăл кулли пире шартлама сивĕре те ăшăтать, вăй-хал парать.

***Ангелина ЕФРЕМОВА,***
***Чăваш Тимешри вăтам шкул.***

## КРОССВОРД «8 МАРТА»



**СЛЕВА НАПРАВО:** 1. Героиня романа М. Булгакова. 4. Ей кузнец Вакула черевички привез. 5. В брачном дуэте с Агутиным. 7. Радистка Штирлица. 9. Молодая, еще не ягнившаяся овца. 10. Дама из мира животных. 13. Неземная у прелестницы. 15. Изюминка в женщине. 16. Неприкрытое бесстыдство. 19. И любовь, и ненависть. 21. Навес для защиты от солнца, дождя. 23. Приятное вкусовое ощущение. 24. Поп-звезда из Ташкента. 26. Кондитерское изделие. 28. Судовая лестница. 30. Женский костюм, который тем ценнее, чем его меньше. 31. Пригород, предместье. 33. Прекрасный персонаж русских сказок. 36. Лаз для хахаля. 37. «Поцелуйные ощущения». 38. Бьется дамой. 39. И мясной, и рисовый, и травяной. 41. Без ребра, зато с Евой. 43. Тонкая сетчатая ткань. 45. И на нее бывает проруха. 47. Лучник любви. 48. Княжна в сари. 50. Женская прядь волос. 52. Советская певица, народная актриса СССР. 53. Трактористка … Ангелина. 54. Танцовщица, жена С. Есенина. 57. Живая морская «мясорубка». 58. «Модная» краска.

**СПРАВА НАЛЕВО:** 2. Процесс снятия бигудей. 3. «Второй отец» женщины. 6. Сказочная прелесть. 8.… Баба против 40 вооруженных до зубов мужиков. 10. Молодежный журнал. 11. Шла по шоссе и сосала сушку. 12. Анна, восхитившая А. Пушкина. 14. Работница по изготовлению тканей. 17. Платоническая любовь. 18. Героиня поэмы С. Есенина. 20. Месяц с женским днем. 22. Тип женского лица. 25. Родственница, о которой вспоминают на пустой желудок. 27. То же, что мать. 29. Сватался к Дюймовочке. 31. …-маше или пресс-… 32. Фамилия трех актрис театра и кино: Веры, Екатерины, Татьяны. 34. Итальянская госпожа. 35. Светило влюбленных. 38. Старинный смычковый музыкальный инструмент. 39. Квинтет плюс трио. 40. Ухажер на танцульках. 42. Женская грудь в поэзии. 44. Река между Польшей и Германией. 45. Одна из киноролей Л. Орловой. 46. Плотная шелковая ткань. 49. Предложенная вместе с сердцем. 51. Сибирский темнохвойный лес. 52. Юбка по длине – ни то ин се. 53. Композитор, народная артистка СССР. 55. Друг куклы Барби. 56. Продолжительная попытка завладеть женским сердцем. 59. Фигура гимнастки.

**Составил В. ПАВЛОВ, п. Ибреси.**

**ТРЕБУЮТСЯ** на работу в Москву каменщики. Тел.:89176760069.

**ПРОДАЕТСЯ** а/м «Ока» – ВАЗ-11130 2003 г. в., пробег 2000 км. Тел.: 89278507813.

**Администрация Ибресинского района выражает глубокое соболезнование Коротковой Людмиле Васильевне, начальнику финансового отдела администрации Ибресинского района, в связи с преждевременной смертью брата**
**АЛЕКСЕЕВА**
**Алексея Васильевича.**

**С глубоким прискорбием извещаем о преждевременной смерти нашей дорогой и любимой матери**
**Клавдии Демьяновны**
**ВЫСОКОВОЙ,**
**проживавшей в п. Буинск.**
***ДОЧЕРИ ЛАРИСА И ЛУИЗА, СЫН ЛЕВ, ЗЯТЬЯ, СНОХА, ВНУКИ.***

**РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу» выражает искреннее соболезнование начальнику финансового отдела администрации района Коротковой Л. В. по поводу преждевременной смерти ее брата**
**АЛЕКСЕЕВА**
**Алексея Васильевича.**

**ООО «Ибресиагрострой» выражает глубокое соболезнование начальнику финотдела администрации района Коротковой Л. В. по поводу преждевременной смерти ее любимого брата**
**АЛЕКСЕЕВА**
**Алексея Васильевича.**

**Выражаем искренние соболезнования родным и близким по поводу преждевременной кончины нашей уважаемой кумы**
**ВЫСОКОВОЙ**
**Клавдии Демьяновны.**
***МАТРОСОВЫ, МЕДВЕДЕВЫ (Комсомольский район).***

**Коллектив ООО «Водстроймонтаж» выражает глубокое соболезнование начальнику финансового отдела администрации Коротковой Л. В. по поводу преждевременной кончины ее брата**
**АЛЕКСЕЕВА**
**Алексея Васильевича.**

**Отдел экономики и управления имуществом выражает глубокое соболезнование начальнику финансового отдела администрации Ибресинского района Коротковой Л. В. по поводу преждевременной кончины ее брата**
**АЛЕКСЕЕВА**
**Алексея Васильевича.**

**Глубоко скорбим по поводу преждевременной смерти нашей дорогой родственницы**
**ВЫСОКОВОЙ**
**Клавдии Демьяновны**
**и выражаем соболезнования семье покойной.**
***ВЫСОКОВЫ (д. Сюрбеевка), ПАРФЕНОВЫ (п. Ибреси), НИКИТИНЫ, ГЛУХОВЫ (г. Чебоксары).***

**Выражаем глубокие соболезнования любимой подруге Ларисе по поводу кончины ее любимой матери**
**ВЫСОКОВОЙ**
**Клавдии Демьяновны.**
***Лариса, Витя, Ванечка МОСКОВКИНЫ.***

**Администрация Большеабакасинского сельского поселения выражает глубокое соболезнование директору ООО «Водстроймонтаж» Марушеву Эдуарду Авенировичу по поводу смерти его матери**
**МАРУШЕВОЙ**
**Марии Архиповны.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3220: чув. – 2380, русск. – 840. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Кузнецов Г. В.